Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско–юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Карягина Марина Федоровна**

**Книга: Ылтăн пан улми**

# Рассказ: Симĕс тус

Çуркунне çитмеллипех çитнине эпĕ атта шыв кĕнинчен ăнлантăм. Лĕч-лĕч-лĕч тутарса утатăп кӳлленчĕксем тăрăх.

Чĕремре лайăх-лайăх пĕтĕм. Илтех кайрăм: такам калама çук хаваслă юрă ĕнĕрлет. Кам-ши тетĕп – хам иккен! Пыра паратăп урампа савăнăçлă юрă юрласа. Хĕпĕртемесĕр епле тӳсес ĕнтĕ: эпĕ паян пиллĕк тултартăм!

Чăх-хăм-чах-хăм! сунасларĕ такам. Пăхатăп та мана хирĕç темле армак-чармак кусса килет. Ман çумран пĕр чарăнми чупса иртсе кайрĕ. Татăлса йĕрет хăй. Пĕчĕкскере йăлт хĕрхенсе пĕтрĕм. Эсир мĕн тунă пулăттăрччĕ кун пек чухне?

Тĕрĕс, пулăшмалла ăна мĕнле те пулин! Ахальтен ман тĕле пулман-çке-ха вăл – эппин, ăна манăнах пулăшмалла.

Аран-аран хăваласа çитрĕм те хӳринчен кап ярса тытрăм. Эй, мăнтарăн! Армак-чармак кăна пулсассăн та чунĕ пур-çке ун: тумлаш пек кусĕпе ман çине чĕтре-чĕтре пăхать. Ĕнтĕркесе кайнăскере ывăçа хупрăм хайхи, тата ăшăрах пултăр тесе алла кĕсьене чикрĕм те чупрăм килелле.

Хапха алăкне питĕрем пекки кăна туса хăварнă – çăра çакса янă. Ку ĕнтĕ пирĕн ял чĕлхипе «килте никам та çук, анчах хуçисем чылайлăха кайман» тенине пĕлтерет.

Суя çăрана хăрах алăпа уçса картишне ярса пусрăм. Пĕр кана пуç тавра шухăша çавăрса илтĕм те пӳрте кĕтĕм. Килте никам та çукки аван-ха – хам хуçа.

Чун–чĕремре канăçсăр туйăм йăшкаса тăрать: ăçта усрас ку армак–чармака?

Пĕрре çитмĕл çичĕ уралла мăнтăркка эрешмен пек курăнса каять вăл мана, тепре вĕтĕ йышши аçтаха евĕр туйăнать... Кăмака çине, ăшă çĕре, хутăм та – кăмăлсăрланать, тетте коробкине ятăм та – килĕштермерĕ. Те алла иленсе кайрĕ ĕнтĕ? Эпĕ ăна пĕрмай ывăçра çупăрласа çӳрейместĕп-çке-ха. Кун каçа çак алăпа ман тем те ĕçлеме тивет: çăвăнмалла, шăл тасатмалла, апат çимелле... Сăмса шăтăкне кĕрсе тухасси те пулма пултарĕ... Чим-ха, çиесси килмест-ши ун? Малтан шыв ĕçтерес.

Савăтпа шыв ăсса илтĕм те армак–чармакăма унта ятăм: мĕн чухлĕ лĕрккес килет – лĕрккетĕрех. Савăнсах кайрĕ хайхи. Кăвакал чĕппи пек, шывран тухасшăн та мар. Кӳлле лекрĕм тесе шутлать-ши хăйĕн ăсĕпе?

«Тавтапуç сана», – пăшăлтатать вăл ман çине ăшшăн-ăшшн пăхса.

Тепĕр кун та тем парсан та «кӳлĕрен» тухмарĕ вăл. Тата тепĕр кун та яхăнне ямарĕ... Килтисене ним те шарламарăм-ха.

Пĕр ирхине пăхатăп та... хам куçа хам ĕненместĕп: шап-шур сухалланса кайнă ман тус! Тымар янă! Пыр та калаç: ятсăр-сумсăр, йăхсăр-кăксăр армак–чармак иккен вăл, тем тымарĕ-мĕн! Мĕн тымарĕ-ши – курăпăр... Тирпейлĕн кăна хитре куршака тăпра ăшне куçарса лартрăм ăна.

Манăн пурнăç йăлт юмаха çаврăнчĕ. Çĕр каçа çиччĕ тăрса пăхатăп тусăма. Çеçке çурма хăтланмасть-и, тата темле тĕлĕнтермĕш пулса иртмен-и – сисмесĕр юлас марччĕ тетĕп.

Ĕнтĕ манăн тус ешерсе кăна ларать. Васка-васка турат çумне турат хушать. Ӳсет, сарăлать, паркаланать.

Кĕр енне куршакран витрене куçарса лартма тиврĕ. «Йывăç пулса тăрасшăн маар-и ку?» – тесе шухăшлатăп аптăранипе. Тăрри маччана пырса перĕнсен мĕн курмалла? Кăларса ывăтаççĕ вĕт мĕскĕне! Пӳрт тăррине касса йывăça ирĕке кăларма хамсăр пуçне килте никам та тавçăраймĕ... Эх, илем мĕнне пĕлмеççĕ-çке!

Хĕл ларнине эпĕ атта шыв кĕми пулнинчен сисрĕм. Кĕрхи кӳлленчĕксенче лач-лач-лач! лачлаттарса çӳреме пит аванччĕ те – хальлĕхе, улттă тултариччен, юр ашса

тертленнипех çырлахмалла пулать ёнтĕ. Сатту кĕрт хӳсе лартсан пӳртсем тăррипе улăп пек çӳретпĕр!

Кăçалхи хĕл пĕлтĕрхинчен илемлĕрех: манăн килте Симĕс тус пур. Урамри хурăнсен çулçисем кайăксемпе пĕрле кĕркуннех кăнтăр енне вĕçсе кайрĕç, манăн йывăç хăнк та тумасть – ем-ешĕл ларать! Савăнса пĕтерейместĕп.

Ăмăртмалла çитĕнетпĕр-çке-ха, тата пĕр–пĕринпе виçĕне-виçĕне ӳсетпĕр. Çĕнĕ çул уявĕ çиттĕр-ха – чăрăш вырăнне капăрлатăп та, тантăшсемпе ун тавра юрла-юрла çаврăнăпăр...

Пĕр ирхине вăрантăм та... уçнă куçа каялла çатăр хупса хутăм: манăн Симĕс тус сап-сарă! Пĕтрĕ пуç! Епле-ха капла?.. Мĕнпе юраймарăм-ши?

Шăнтрăм-ши? Шăварма пĕлеймерĕм-ши?

Юратса çитерeймерĕм-ши?..

Йăр-р юхать куççулĕм пит çăмарти тăрăх. Вĕлтĕр-р татăлса ӳкет сарă çулçă урайне...

Мĕн тăвас тетĕн ёнтĕ – хуçăк кăмăлпах хĕл каçма тиврĕ кăçал.

...Юр айĕнчен ешĕл курăк тапса тухрĕ. Манăн тута паян хăйне хăй кулса тăрать: эпĕ улттă тултаратăп! Тата… Тата… Куна сире кайран калăп-ха…

– Атя пĕрле касăва! – инçетренех кăшкăрса чĕнет мана Çеруш. Хăйĕн патакĕ акăш-макăш чаплă.

– Манăн санăнни пек хӳхĕм туя çук çав, – тетĕп хĕвеле хирĕç куçа хĕскелесе пăхнă май.

– Эс пӳртӳнти леш хăрнă йывăçна хуçса тух – чухах пулать, – ăс парать мана Çеруш.

– Каларăн та... – тутана тăсатăп эпĕ. – Пĕлессӳ килсен, хăрса ларман вăл. Паян симĕс çулçă кăларчĕ!

Халех калас теменччĕ те ёнтĕ – юрĕ... Лупас айĕнчен чĕн пушă сĕтĕрсе тухрăм та пĕр-рех тăсса ятăм – чăвăш! турĕ. Çерушсен таки туххăмрах кĕтӳ пуçне çитсе тăчĕ те сурăхсене салтак пек, ретрен кăлармасăр, çерем çине ертсе кайрĕ. Йĕрке тĕк йĕрке вара ку!

Хамăр кас ачисемпе касура кунĕпех вылярăмăр. Ара, выльăх пăхасси пирĕншĕн, ял шăпăрланĕсемшĕн, ĕç-и вара вăл?

– Каçхи апат çиме пирĕн пата пырăр, – терĕм юлташсене киле саланнă чухне.

Çуралнă куна тем каласа чĕнеççĕ – пĕлсе пĕтерeймерĕм-ха эп. Шухăшларăм-шухăшларăм та пĕрех апат çиме çӳреççĕ вĕт çуралнă куна терĕм...

Пите çуса çĕнĕ кĕпе тăхăнма ĕлкĕреймерĕм – хăнасем каптăрт кĕрсе те тăчĕç. Паппипе мами тусăмсене сĕтел хушшине лартрĕç, тутлă апат-çимĕçпе сăйлама пуçларĕç. Тепре пăхса илнĕ çĕре чашăкĕсем çап-çутă – кунĕпе касура çӳресе пăхăр–ха!

– Халĕ – чи тĕлĕнмелли самант, – терĕ паппи пурне те шăпланма ыйтса. – Ачасем, алăран алла çавтăнăр та куçăрсене хупăр. Ман хыççăн утатпăр! Эпĕ паппинчен çавтăнтăм, манран Çеруш, Çерушран Сашук, Сашукран Толик, Толикран Алюк, Алюкран Ленук, Ленукран Анюк, Анюкран мами... Пыратпăр куçа хупса, такăнса ӳкесрен урасене хуллен куçарса. Ман пӳлĕме кĕрех кайрăмăр – ара, кунта ман пушмак та куçлă!

– Çитрĕмĕр, куçăра уçăр, – терĕ паппи чарăнса.

Мами çутă çутса ячĕ. Ак тамаша! Манăн Симĕс тус çулçă сарни çитмен... ман валли парне çитĕнтернĕ! Мĕн кăна ӳссе ларман ун турачĕсем çине: тĕрлĕ тĕслĕ кĕнекесем, теттесем... хитре кĕпе-йĕм таранччен.

– Ай-яй! – тесе ячĕç ачасем. Эпĕ куçăм-пуçăм алчăраса кайнипе: «Тавтапуç сана, Симĕс тусăм!» – тесе пăшăлтатма çеç пултартăм. Ăнлантăм: илтрĕ вăл мана.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.